Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**.
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой – **www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства.

## Автор: Людмила Николаева

## Книга: Сывлăм ăçтан тупăнать?

## Стихотворение: Сарă чĕпĕ

Аллăмра шур çăмарта,
Так-так-так таккать шалта.
«Эп кунта-çке, эп кунта», –
Тенĕн туйăнать мана.

Ак çăмарта катăлать,
Шĕвĕр сăмса курăнать.
Икĕ пĕчĕк йăлтăр куç,
Çавра уйăх – сарă пуç.

Çутă куна саламлать:
– Шим-шим-шим!
Манăн тус таçтаваскать:
– Чим-чим-чим!

– Чĕппĕмçĕм, çемçе çăмха,
Ан васка, кăштах тăхта!
Хĕвел çинче ăшăнсам,
Çутă кунпа савăнсам.

Эс çуралнă уяр кун,
Эс çуралнă шăмат кун.
Сана хĕвел юратать,
Шевлисемпе ыталать.

Санăн пур аппу, пиччӳ –
Ярăнаççĕ ав чуччу.
Сан аçу – сап-сар автан,
Апат-çимĕç шыракан.

Аннӳ вара – чăпар чăх.
Сирĕн пысăк пуян йăх.
Анне – яланах анне,
Чуп ун çунатти айне!

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.